# Каламалли пуртан

Владимир Кузьмин – ку чухнехи чăваш литературинчи паллă ят. Вăл хăй хайлавĕсене чăваш вулаканĕн кăмăлне çырлахтармалла çырать. Унăн çĕнĕ кĕнеки «Илем çăлтăрĕсем» ятлă. «Çĕр пики» повĕçенчен илнĕ сыпăка шутламасан, илемлĕ проза хайлавĕсенчен тăракан кăларăм мар вăл. Ентешĕсен ятне, пĕле-тăран хисепне хывнă янкăс юрă темелле пуль ăна. Самаях хулăн кĕнеки тата пĕр кĕвĕллĕ, пĕр çемĕллĕ. Вĕсенче автор хăй сăнарлакан пултаруллă çынсене хисеплени, ячĕшĕн çеç çырса кайманни кашни ӳкерчĕкренех сисĕнсе тăрать. Вĕсем унăн вĕрентекенĕсем те, çывăх юлташĕсем те.

«Пурнăç сĕткенĕ» хайлавпа уçăлать кĕнеке. Унта автор Вăрнар районĕнчи Çĕрпелти библиотека заведующийĕн Иван Константинович Ивановăн пархатарлă ĕçне-хĕлне сăнарласа парать, унăн кулленхи пурнăçĕпе паллаштарать. Мана çав тĕрленчĕкре Иван Константинович çапла калани питĕ чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ: «Литературăпа искусство пек çынна ӳссе аталанма пулăшакан урăхла хăватлă вăй хальлĕхе курмастăп-ха» тесе пĕтĕм пурнăçăн йĕрĕлчине пĕтĕмлетни. Çав шухăшах эпĕ Владимир Кузьмин тĕнчипе паллă Праски Витти художникпа калаçнинче те куратăп. Малтан эпĕ Праски Виттин Петров хушамачĕ мĕнле майпа Праски Витти пулса кайнине калам-ха. Çавна Владимир Кузьмин, Виталий Петрович каласа панипе, çапла çырса кăтартать: «Хушма хушаматпа мухтанас тесе те, хамăн тĕп хушамата кăмăлламасăр тăман пирки те мар. Ăнсăртран пулса тухрĕ. Чиперех ĕçлесе пурăнаттăмччĕ-ха Петров хушаматпа. Венгрире чухне чирлесе ӳкрĕм. Пульницанах лекмелле пулчĕ. Мадьярсен йăли-йĕрки пирĕннинчен урăхларах, чирлĕ çыннăн хучĕ-картти çине амăшĕн ятне те çырса хураççĕ. «Аннӳ мĕн ятлă?» – тесе ыйтрĕç те эпĕ: «Праски», – тесе пĕлтертĕм. Вĕсем мана Петров Виталий Петрович кăна мар, Праски Витти тесе те палăртрĕç. Хама та килĕшрĕ ку. Мăшкăлласа чĕнни мар. Çакăн хыççăн картинăсем айне те «Праски Витти» тесе алă пусма пуçларăм».

Праски Виттин Тăван çĕршывĕ – Вăрнар районĕнчи Малти Ишек ялĕ. Вăл чăн-чăннипе чăваш халăх художникĕ. Хушма хушаматне те вăл чăваш халăхĕпе тымарлă венгр халăхĕнчен илсе килнĕ пулин те, вăл «манăн чăвашах çӳле çĕклес, чăвашах тĕнчипе кăтартас килет» тет. «Хамăн халăхăн йăли-йĕркине, чĕлхине, историне сăнарласа сыхласа хăварассишĕн эпĕ яланах кĕрешме хатĕр. Шухăшлавпа шырав ăмăртăвĕнче маншăн чи малта тăраканĕ вăл – чăваш çынни. Наци культури, халăх илемĕ нихçан та пĕтмелле мар», – тет.

Чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен чун савăнăçĕпе, чун ыратăвĕпе çырнă Владимир Кузьмин. Вăрнартан тухнă илем çăлтăрĕсем – Алексей Воробьевпа Кĕркури Илепер поэтсем çинчен те пĕтĕм чун ăшшипе çырнă автор.

Тăван çĕр, çуралнă ял асамĕ тыткăнлать кĕнеке авторне. «Хуть те мĕнле пулсан та, хамăрăн анне сĕчĕпе, атте сухапуçĕн вăйĕпе пулăхлатса ешернĕ пуян çĕр пире хăйĕн çăлкуçĕнчен имлĕ шывне ĕçтерчĕ, вăй кĕртрĕ, куçа-пуçа уçтарчĕ. Çĕрĕн çак илемлĕ те симлĕ тăрăхĕнче çуралса ӳснĕшĕн кама – Туррине е Çут çанталăк пулăмне – тав тумаллине те пĕлеймерĕмĕр пуль хавхалантарупа хуйхăру саманчĕсенче»,

– тĕнче çути кăтартнă тăван енне мухтав юрри кĕвĕлет Владимир Кузьмин. Пĕрле ӳснĕ тантăшĕ унăн Кăмашри Улатимĕр Яковлев, Беларусь патшалăх академи симфони оркестрĕнче фаготпа калакансен ушкăнне ертсе пыракан чăваш каччи. Владимир Яковлевăн пурнăç çулĕ те çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ пулман иккен. Вулакана пĕлме Владимир Кузьмин ун пурнăç çулне çапла çырса пĕлтерет: «Мускавран Шупашкара таврăнсан ăна музыка театрне ĕçе илнĕччĕ. Çемйипе виççĕн «Атăл» хăна çуртĕнче нушаланса пурăнатчĕç. Хваттер пирки шантарман та иккен, кĕтме, чăтма хушнă. Чĕмпĕрте симфони оркестрĕ туса хурсан Яковлева тӳрех унта чĕнсе илчĕç те виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Оркестр солистĕнче тăватă çул ĕçленĕ хыççăн вăл çĕршыври пысăк конкурса хутшăнать. Çĕнтерет. 1972 çулта вара Минска куçса каять. Унта ăна правительство искусство ăстисем валли тытса тăракан ятарлă хваттере вырнаçтарать. Çавăнтанпах Сурганов урамĕнче пурăнать Яковлевсен тăватă çынлă çемйи. СССР Культура министерстви ăна Африкăна ĕçлеме янăччĕ. Тăватă çул арабсене музыкăна вĕрентнĕ хыççăн вăл хăйĕн оркестрне таврăнать. Çав вăхăтрах Беларусь консерваторийĕнче те ĕçлеме тытăнать. Ку таранччен – оркестрта та, консерватори кафедринче те. Профессор.»

«Илем çăлтăрĕсем» кĕнекери тепĕр хайлава та асăнса хăварас килет. Вăл «Çунат» ятлă. Унта автор Пантелеймон Михайлович Ермошкин çинчен çырать. Хайлав геройĕ тăван Патăрьел районĕнче мар, кӳршĕллĕ Йĕпреç районĕнче «Сельхозтехника» уйрăмĕнче тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлесе ирттернĕ. Тăрăшса ĕçленĕ тата. Пантелеймон Михайлович Патăрьел районĕнчи Каншел ялĕнчи паллă ентешĕсемпе Василий Игнатьевпа тата Алексей Васильевпа пĕрле ӳссе çитĕннĕ. Пĕрле ӳснĕ тантăшĕсене юратса вăл кĕнеке авторне çапла каласа парать: «Литературăна эпĕ ...юрататăп пулин те, пур пĕрех илем сăнарлăхĕн çулĕпе каяймарăм. Кашнин хăйĕн çулĕ, тĕллевĕ, тӳпи. Турă пани пулмалла иккен. Çыннăн ăс пурлăхне хапсăнма, кĕвĕçме те кирлĕ мар. Эпĕ, туссем, хамăн пурнăç лиризмне пур пĕрех тупрăм, сирĕнпе, çыравçăсемпе, юнашарах пыратăп пуль тетĕп. Пырса курăр Йĕпреçе! Музей турăм, паллах, пĕччен мар, анчах хамăнах çĕр çывăрмасăр шухăшламалла пулчĕ. Шыв арманĕ çук кунта, çил арманĕ вара – пур. Çунаттисемпе хăлаçланкаласа аваллăха аса илтерет. Ăна эпир Çĕнĕ Кĕлĕмкасси ялĕнчен куçартăмăр. Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче тунăскер. Хура пӳрт, тарасаллă çăл тата тем те пур унта. Чăваш хресченĕ ĕлĕк мĕнле йĕркепе пурăннă – çавна курать музее пыракан çын. Чăн-чăн чăваш ялĕн килĕ. Этнографи пайĕсĕр пуçне сăнарлă ӳкерчĕксен, скульптурăсен уйрăмĕсем пур. Саратпăр, пуянлататпăр литературăпа искусствăна халăх хушшинче, халăхран тухнă ăстаçăсемпе пĕрле, – кăшт мухтанса та илес терĕ пулас Каншел ачи», – çыннин ĕçĕ-хĕлне кура çапла кăмăллăн тĕвĕлесе хурать хайлавне Владимир Кузьмин.

«Çăпата» – хитре эсĕ тупата» тĕрленчĕкĕнчен те эпĕ ниепле те пăрăнса иртеймерĕм. Çăпата тени истори анине чăмнă ĕнтĕ. Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăсри «Çăпата» фольклор ушкăнĕ вара чĕрĕ-ха. Илемлĕ пулĕ ĕнтĕ вăл, чăнах та, сцена çине çăпата сырнă, чăваш тумĕ тăхăннă, пуçне сурпанпа илемлетнĕ, кăкăрĕ умне шӳлкеме çакнă хĕрсене, аслăрах çынсене ташланине курма. Çăпати, тумĕ анчах авалхи-тĕр, илемĕ вара – паянхи, чăваш чунне лараканни, çырлахтараканни. Фольклор ушкăнне халăх ансамблĕ ятне те панă-мĕн...

«Илем çăлтăрĕсем» хайлавсен пуххи – паха кĕнеке. Чăваш халăхĕн çăлтăрĕсем çуталсах тăччăр. Чăваш пурнăçĕ илемпе пурăнтăр.

Иртнĕ уйăхра пан улми сăпасĕнче Владимир Прокопьевич Кузьмин çитмĕл çул тултарчĕ. Пултаруллă автора ырлăхсывлăх, телей, творчество ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**Хветĕр АГИВЕР**